20-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
ОКТЯБРЬ
15
ЭРНЕКУН
205(6442) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

Кӑнтӑр-Хӗвеланӑç фрончӗн çарӗсем, ӑнӑçлӑн наступлени туса пырса, противник питех те хаяррӑн хирӗç тӑнине çӗнтерне те паян, октябрӗн 14-мӗшӗнче, Украинӑри промышленноçлӑ пысӑк область центрне **Запорожье** хулине—чугун çулсемпе шыв çулӗсен питех те кирлӗ тӗввине тата нимӗçсен Днепр шывӗн анат енчи питӗ пысӑк опорнӑй пункчӗсенчен пӗрине—штурмласа тытса илнӗ.

Запорожье хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ çапӑçусенче **Чуйков** генерал-лейтенантӑн, **Данилов** генерал-майорӑн, **Лелюшенко** генерал-лейтенантӑн, **Куприянов** генерал-майорӑн, **Семенов** генерал-майорӑн, **Гурьев** генерал-майорӑн çарӗсем, танковӑй çарсен генерал-лейтенанчӗн **Пушкинӑн**, генерал-лейтенант **Руссияновӑн** танковӑй чаçӗсем, тата авиаци генерал-лейтенанчӗн **Судецӑн**, авиаци генерал-майорӗн **Толстиковӑн** летчикӗсем чапа тухнӑ.

Уйрӑмах çаксем чапа тухнӑ:

Ребриков генерал-майорӑн 266-мӗш Артемовски стрелковӑй дивизийӗ, **Голоско** генерал-майорӑн 333-мӗш Синельниковски стрелковӑй дивизийӗ, **Карамышев** генерал-майорӑн 59-мӗш Гвардейски Краматорски стрелковӑй дивизийӗ, **Вагин** полковникӑн 79-мӗш Гвардейски стрелковӑй дивизийӗ, **Лещинин** генерал-майорӑн 39-мӗш Гвардейски Барвенковски стрелковӑй дивизийӗ, **Панков** полковникӑн 88-мӗш Гвардейски стрелковӑй дивизийӗ, **Михайлов** полковникӑн 78-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Лебеденко** генерал-майорӑн 50-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Макаренко** генерал-майорӑн 82-мӗш Гвардейски стрелковӑй дивизийӗ, **Монахов** генерал-майорӑн 60-мӗш Гвардейски Павлоградски стрелковӑй дивизийӗ, **Афанасьев** генерал-майорӑн 244-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Зданович** полковникӑн 203-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Девятко** подполковникӑн 3-мӗш Чаплински танковӑй бригади, **Беспалов** подполковникӑн 39-мӗш Чаплински танковӑй бригади, **Михеевичев** подполковникӑн 305-мӗш Павлоградски штурмовой авиаци дивизийӗ, **Селиверстов** полковникӑн 295-мӗш Новомосковски истребительнӑй авиаци дивизийӗ, **Коломейцев** полковникӑн 5-мӗш Гвардейски штурмовой авиаци дивизийӗ, **Мироненко** генерал-майорӑн 6-мӗш Гвардейски штурмовой авиаци дивизийӗ, **Павлов** полковникӑн 7-мӗш артиллери дивизийӗ, артиллери генерал-майорӗн **Ратовӑн** 9-мӗш артиллери дивизийӗ, **Усик** подполковникӑн 23-мӗш минометнӑй бригади, **Даньшин** полковникӑн 22-мӗш çӳлелле перекен артиллери дивизийӗ, **Мурашко** подполковникӑн 9-мӗш Гвардейски танковӑй бригади, **Добродеев** подполковникӑн 20-мӗш Гвардейски танковӑй полкӗ, **Грецкий** подполковникӑн 5-мӗш Гвардейски танковӑй полкӗ, **Данилов** подполковникӑн 141-мӗш танковӑй полкӗ, **Мышков** майорӑн 1443-мӗш хӑй тӗллӗн çӳрекен артиллери полкӗ, **Панков** подполковникӑн 1544-мӗш хӑй тӗллӗн çӳрекен артиллери полкӗ, **Коноплев** полковникӑн 11-мӗш инженерла штурмовой бригади, **Кобрин** полковникӑн 99-мӗш тупӑллӑ артиллери полкӗ, **Зубов** майорӑн 141-мӗш минометнӑй полкӗ, **Чечетин** подполковникӑн 531-мӗш минометнӑй полкӗ, **Меркулов** капитанӑн 1248-мӗш истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ, **Анохин** подполковникӑн 103-мӗш Гвардейски тупӑллӑ артиллери полкӗ, **Олейник** подполковникӑн 35-мӗш Гвардейски минометнӑй полкӗ, **Зырин** подполковникӑн 100-мӗш Гвардейски минометнӑй полкӗ, **Кириллов** подполковникӑн 61-мӗш Гвардейски минометнӑй полкӗ, **Кислицкий** подполковникӑн 62-мӗш Гвардейски минометнӑй полкӗ, **Уманский** майорӑн разведка тӑвакан 8-мӗш Гвардейски уйрӑм артиллери дивизионӗ, **Юдичев** капитанӑн корректировка тӑвакан 304-мӗш авиаци эскадрильи.

Тунӑ çӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас майпа, **Запорожье** хулине ирӗке кӑларассишӗн çапӑçнӑ чухне чапа тухнӑ соединенисемпе чаçсене „**Запорожски**“ тесе ят парас.

Малашне çав соединенисемпе чаçсене çапла чӗнмелле тӑвас:

79-мӗш Гвардейски Запорожски стрелковӑй дивизи,
88-мӗш Гвардейски Запорожски стрелковӑй дивизи,
78-мӗш Запорожски стрелковӑй дивизи,
50-мӗш Запорожски стрелковӑй дивизи,
82-мӗш Гвардейски Запорожски стрелковӑй дивизи,
244-мӗш Запорожски стрелковӑй дивизи,
203-мӗш Запорожски стрелковӑй дивизи,
5-мӗш Гвардейски Запорожски штурмовой авиаци дивизийӗ,
6-мӗш Гвардейски Запорожски штурмовой авиаци дивизийӗ,
7-мӗш Запорожски артиллери дивизийӗ,
9-мӗш Запорожски артиллери дивизийӗ,
23-мӗш Запорожски минометнӑй бригада,
22-мӗш Запорожски çӳлелле перекен артиллери дивизийӗ.
9-мӗш Гвардейски Запорожски танковӑй бригада.
20-мӗш Гвардейски Запорожски танковӑй полк,
5-мӗш Гвардейски Запорожски танковӑй полк,
141-мӗш Запорожски танковӑй полк,
1443-мӗш Запорожски хӑй тӗллӗн çӳрекен артиллери полкӗ,
1544-мӗш Запорожски хӑй тӗллӗн çӳрекен артиллери полкӗ,
11-мӗш Запорожски инженерла штурмовой бригада,
99-мӗш Запорожски тупӑллӑ артиллери полкӗ
141-мӗш Запорожски минометнӑй полк,
531-мӗш Запорожски минометнӑй полк,
1248-мӗш Запорожски истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ,
103-мӗш Гвардейски тупӑллӑ артиллери полкӗ,
35-мӗш Гвардейски Запорожски минометнӑй полк,
100-мӗш Гвардейски Запорожски минометнӑй полк,
61-мӗш Гвардейски Запорожски минометнӑй полк,
62-мӗш Гвардейски Запорожски минометнӑй полк,
8-мӗш Гвардейски Запорожски разведка тӑвакан уйрӑм артиллери дивизионӗ,
304-мӗш Запорожски корректировка тӑвакан авиаци эскадрильи.

266-мӗш Артемовски стрелковӑй дивизие, 333-мӗш Синельниковски стрелковӑй дивизие, 55-мӗш Гвардейски Краматорски стрелковӑй дивизие, 39-мӗш Гвардейски Барвенковски стрелковӑй дивизие, 60-мӗш Гвардейски Павлоградски стрелковӑй дивизие, 3-мӗш Чаплински танковӑй бригадӑна, 39-мӗш Чаплински танковӑй бригадӑна, 305-мӗш Павлоградски штурмовой авиаци дивизине, 295-мӗш Новомосковски истребительнӑй авиаци дивизине, нимӗç захватчикӗсене хирӗç пыракан çапӑçусенче иккӗмӗш хут чапа тухнӑскерсене, **Хӗрлӗ Ялав** орденӗпе наградӑлама тӑратас.

Паян октябрӗн 14-мӗшӗнче, 23 сехет те 30 минутӑра пирӗн Тӑван çӗршывӑн столици **Мускав Запорожье** хулине ирӗке кӑларнӑ хамӑрӑн паттӑр çарсене икçӗр çирӗм тӑватӑ тупӑпа çирӗм хут пӗр харӑс персе Тӑван çӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ лайӑх çапӑçнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур çарсене, **Запорожье** хулине ирӗке кӑларассишӗн çапӑçнӑскерсене, **тав тӑватӑп.**

Хамӑрӑн Тӑван çӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн çапӑçса пуçӗсене хунӑ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗç захватчикӗсене—**вилӗм!**

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1943 çулхи октябрӗн 14-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ОКТЯБРӖН 13-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

МЕЛИТОПОЛЬ енче пирӗн çарсем 3 кун хушши хаяррӑн çапӑçнӑ хыççӑн тӑшманӑн вӑйлӑ çирӗплетнӗ оборона тӑрӑхне татса кӗнӗ те МЕЛИТОПОЛЬТЕН çурçӗртерехре тата кӑнтӑртарахра Молочная ятлӑ юханшыв урлӑ каçнӑ, 8 километртан пуçласа 10 километр таран малалла куçса, тӗреклетнӗ 20 пункта ытла тытса илнӗ. Çапӑçусем МЕЛИТОПОЛЬ хули варринче пыраççӗ. Нимӗçсене сыхсем тӗлӗшпе тата техника енчен пысӑк çухатусем кӳреççӗ.

ЗАПОРОЖЬЕ хули енче пирӗн çарсем 4 кун хушши хыта çапӑçнӑ хыççӑн тӑшманӑн вӑйлӑ çирӗплетнӗ оборонине татса кӗнӗ те 8 километртан пуçласа 10 километр таран малалла куçнӑ, 30 ял ытла тытса илнӗ, çапӑçусем ЗАПОРОЖЬЕ хулинчен 8—10 километрта пыраççӗ. Артиллерипе авиаци вӑйлӑн пыра-пыра çапса, нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсене нумай вӗлерсе пӗтернӗ, çавӑн пекех тата тӑшманӑн танкӗсемпе артиллерине нумай пӗтерсе тӑкнӑ.

ДНЕПР шывӗн вӑтам тӑрӑхӗнче Днепрӑн сылтӑм енче КИЕВРАН кӑнтӑртарахра пирӗн çарсем хӑйсен плацдармне аслӑлатасшӑн вӑйлӑн çапӑçаççӗ. Пирӗн çарсем тӑшман оборонине татса кӗнӗ те 6 километр малалла куçнӑ. Нимӗçсем темиçе хутчен те контратакӑсем тунӑ, анчах та вӗсен контратакисене пысӑк çухатусем кӳрсе сирсе янӑ.

ГОМЕЛЬТЕН кӑнтӑртарахри тата çурçӗртерехри районра пирӗн çарсем тӑшман оборонине татнӑ та Сож шывӗ урлӑ каçса кайнӑ, темиçе километр таран малалла куçнӑ, халь ГОМЕЛЬ хули патӗнчех çапӑçаççӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче вӑйлӑ разведка тунӑ тата тӑшмана хирӗç артиллерипе минометсенчен персе тӑнӑ.

Октябрӗн 12-мӗшӗнче пирӗн çарсем мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 127 танкне персе çӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата çӳлелле перекен артиллери тӑшманӑн 90 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Мелитополь енче пирӗн çарсем 3 кун хаяррӑн çапӑçнӑ хыççӑн Мелитополь хулинчен çурçӗртерехре тата кӑнтӑртарахра тӑшманӑн вӑйлӑ тӗреклетнӗ оборона тӑрӑхне татса кӗнӗ. Нимӗçсем Молочная шывӗн хӗвелтухӑç енче танксене чарма икӗ рет канав алтса тухнӑ Хӗвеланӑç енче танксене чарма та та тепӗр тарӑн канав алтса тухнӑ, унта темӗн чухлӗ дзотсем, окопсем, траншейӑсем тата вӗсем хушшинче çӳремелли çулсем чавса тунӑ. Совет çарӗсем тӑшман оборонине татнӑ та Молочная шывӗ урлӑ каçса кайнӑ. Тӗреклетнӗ темиçе яла тытса илнӗ хыççӑн Мелитополь хулине вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Нимӗçсем çапӑçава хӑйсен халь кӑна илсе пынӑ резервӗсене кӗрте-кӗрте яраççӗ, темӗн пулсан та пирӗн çарсен наступленине чарма хӑтланаççӗ. Анчах пирӗн чаçсем вӗсен контратакисене пурне те сире-сире яраççӗ. Пӗр соединени чаçӗсем Мелитополӗн кӑнтӑр хӗррине кӗрсе кайнӑ та паян хула варринчи урамсенче хаяррӑн çапӑçаççӗ. Тӑшмана пысӑк çухатусем кӳреççӗ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх 3 кун хушшинче Мелитопольтен кӑнтӑртарахра кӑна 4.000 нимӗç салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ. 38 танк, хӑй тӗллӗн çӳрекен 16 тупӑ тата 82 хир туппи пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн çарсем трофейӑсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Запорожье хули енче пирӗн çарсем 4 кун хушши çапӑçнӑ хыççӑн тӑшманӑн вӑйлӑ çирӗплетнӗ оборонине татса кӗнӗ те, малалла куçса, 30 ял ытла тытса илнӗ. Паянхи кун пӗтсе килнӗ тӗлелле пирӗн çарсем Запорожье хулинчен 8—10 километрта çапӑçнӑ. Нимӗçсем хӑйсен пехотин, танкӗсен, хӑй тӗллӗн çӳрекен тупписен пысӑк вӑйӗсене контратакӑна кӗртсе янӑ. Совет артиллерийӗ, минометсен гвардейски чаçӗсем тата авиаци нимӗçсене питӗ хӑватлӑн персе, калама çук йывӑр çухатусем кӳнӗ. Пӗр участокра кӑна нимӗçсен пехотине пӗр полка çити вӗлерсе пӗтернӗ, 22 танк, хӑй тӗллӗн çӳрекен 5 тупӑ тата 6 бронетранспортер пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра совет чаçӗсем тӑшманӑн тӗреклетнӗ пӗр паха пунктне штурмласа тытса илнӗ. Çапӑçу хирӗнче тӑшманӑн 1.500 вилли ытла выртса юлнӑ тата персе çӗмӗрнӗ 14 танкӗ тӑрса юлнӑ. 38 тупӑ, 200 пулемет ытла, боеприпассен тата çар пурлӑхӗн темиçе складне тытса илнӗ.

Сывлӑшри çапӑçусенче кун каçиччен пирӗн летчиксем нимӗçсен 46 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Днепр шывӗн сылтӑм енче Киевран кӑнтӑртарахра пирӗн çарсем хӑйсем йышӑннӑ плацдарма аслӑлатасшӑн вӑйлӑн çапӑçаççӗ. Тӑшман позицийӗсене артиллери вӑйлӑн персе тӑнӑ хыççӑн совет танкӗсемпе пехоти тӑшман оборонине татса кӗнӗ. Пирӗн çарсем 6 километр малалла куçнӑ та нимӗçсене тӗреклетнӗ темиçе вырӑнтан хӗссе кӑларнӑ. Хӑйӗн вӑйӗсене тепӗр хут йӗркеленӗ хыççӑн тӑшман темиçе хут та хаяр контратакӑсем тунӑ. Ку контратакӑсене пирӗннисем тӑшмана пысӑк çухатусем кӳрсе сирсе янӑ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, 2.000 нимӗç салтакӗпе офицерне çити вӗлерсе пӗтернӗ. 27 танк, хӑй тӗллӗн çӳрекен 8 тупӑ тата тӗрлӗ калибрлӑ 16 тупӑ персе çӗмӗрнӗ е çунтарса янӑ. Тепӗр участокра тӑшман хӑйӗн çарӗсене СС дивизийӗсен чаçӗсемпе вӑйлатнӑ та хӑйӗн çухатнӑ позицийӗсене каялла туртса илме хӑтланнӑ. Хаяр çапӑçусенче пӗр соединени чаçӗсем нимӗçсен пур контратакисене те сирсе янӑ. Хӑйсем тытса тӑракан тӗреклетнӗ ялсене çирӗппӗн тытса тӑраççӗ.

Пирӗн авиаци нимӗçсен пӗр çӗре пуханса тӑнӑ çарӗсемпе техникине вӑйлӑн пыра-пыра çапнӑ. Бомбӑсем пӑрахнипе пула нимӗçсен 20 танкне çити тата 200 автомашинӑран кая мар пӗтерсе тӑкнӑ, боеприпассен 8 складне тата пӗр горючи складне сирпӗнтерсе янӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче нимӗçсен 28 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Гомель енче пирӗн çарсем Сож шывӗ урлӑ каçнӑ та халӗ Гомель хули умӗнче çапӑçаççӗ. Артиллерипе минометсенчен персе тата контратакӑсем туса, тӑшман пирӗн наступлени тӑвакан чаçсене чарма хӑтланнӑ, анчах та йывӑр çухатусем тӳснӗ хыççӑн каялла чакнӑ. Пӗр соединени боецӗсем гитлеровецсен пӗр батальонне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. 14 тупӑ, 68 пулемет тата 3 артиллери склачӗ тытса илнӗ. Тепӗр участокра пӗр чаçри боецсем çапӑçса малалла куçнӑ, 500 нимӗç салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Хӗрлӗ ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗ Балтика тинӗсӗнче тӑшманӑн 5.000 тонна таякан суднине шыва путарнӑ.

* * *

Минск облаçӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен Суворов ячӗпе тӑракан отрячӗ шоссе çулӗ çинче нимӗçсен фронталла пыракан, çар хатӗрӗсем тиенӗ 26 автомашинине сирпӗнтерсе янӑ. Çав шоссе çулӗ çинчех партизансем 12 кӗпере пӗтерсе тӑкнӑ тата телефонпа телеграф линине 43 километр таран татса тухнӑ.

* * *

Нимӗçсен 252-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчен Хӗрлӗ Çар енне куçнӑ лейтенант Эрвин П., рота командирӗ пулнӑскер, çапла каласа панӑ: „Сентябрь уйӑхӗнче пулса иртнӗ çапӑçусем ман шухӑшсене тӗпренех улӑштарчӗç. Уйӑх çурӑ хушшинче манӑн ротӑра 150 çын пӗтрӗ. Чи хӑрушӑ кун маншӑн сентябрӗн 27-мӗшӗнче пулчӗ. Çав кун манӑн рота пачах пӗтсе ларчӗ. Ротӑри 70 çынтан 7 çын кӑна тӑрса юлчӗ. Мана хуçалӑх командисемпе обозран 30 çын ытла хушса пачӗç. Кунсӑр пуçне тата лазаретсенчен çӑмӑл аманнӑ темиçе салтак ротӑна таварӑнчӗç. Вара çавсенчен те нумайӗшӗ часах стройран тухрӗç. Манӑн каллех мӗн пурӗ те 5 çын кӑна тӑрса юлчӗ. Çав самантра эпӗ мана позици улӑштарма хушакан приказ илтӗм. Анчах манӑн вӑй-хал тата шухӑш кӑмӑлсем хавшаса çитрӗç. Юлашки çапӑçусенче çав тери пысӑк çухатусем тӳсни, лару-тӑру çав тери шанчӑксӑрри мана хӗçпӑшала пӑрахса парӑнмалла турӗç. Германи çарӗнче дисциплина халлӗхе пур-ха. Салтаксем командирсен приказӗсене пурнӑçа кӗртсе пыраççӗ, анчах та халӗ ӗлӗкхи пек мар ӗнтӗ. Халӗ приказсене темиçе хутчен те калама тивет. Час-часах хӑратма тивет, хӑш чухне персе пӑрахмаллисем те пулаççӗ. Таркӑн салтаксен йышӗ ӳсме пуçларӗ. Пуринчен те çакӑ куранса тӑрать: ӗç нимӗçсен çарӗ арканса кайса пӗтесси патне пырать“.

Выльӑхсене хӗл каçарма кашни колхоз хатӗр пултӑр

Паян пирӗн республикӑри колхозсемпе совхозсенче выльӑхсене хӗл каçарма хатӗрленсе çитнипе çитменнине палӑртмалли государственнӑй тӗрӗслӳ пуçланать, вӑл октябрӗн 25-мӗшӗччен пырать. Государственнӑй тӗрӗслӳ Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗ «Колхозсемпе совхозсенче выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каçарма хатӗрленмелли мерӑсем çинчен» йышӑннӑ постановлени тӑрӑх пулса иртет.

Чӑваш республикинчи колхозсемпе совхозсем, вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене çӗнтерсе пырса, 1943 çулӑн 8 уйӑхӗ хушшинче выльӑх-чӗрлӗх хисепне ӳстермелли çулталӑкри плана пӗтӗмпех тата пур йышши выльӑхсем енӗпе те тултарчӗç. 8 уйӑх хушшинче выльӑх-чӗрлӗхӗн хисепне ӗне-вӑкӑрсем енӗпе 22,3 процент, сыснасем енӗпе—25,2 процент, сурӑхсемпе качакасем енӗпе 30,5 процент ӳстерне. Продуктивнӑй выльӑхсем ӗрчетмелли çулталӑкри плана республикӑн 24 районӗ пурнӑçларӗ. Выльӑх-чӗрлӗхӗн йышне ӳстерес тӗлӗшпе Сӗнтӗрвӑрри, Вӑрмар, Элӗк, Шӑхасан, Вӑрнар тата Канаш районӗсенчи колхозсем пуринчен те пысӑкрах çитӗнӳ турӗç.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ «Колхозсемпе совхозсенче выльӑх-чӗрлӗх йышне тата вӗсен тухӑçлӑхне ӳстермелли мерӑсем çинчен» йышӑннӑ постановлени колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе вӑйлатмалли боевой программа пулса тӑчӗ.

Колхозсен обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхӗ валли çӗнӗ çуртйӗрсем тӑвас тӗлӗшпе те пирӗн республика кӑçал пысӑк ӗçсем турӗ. Колхозсенче кӑçал лаша витисем 17, ӗне витисем 86, пӑру витисем 35, сысна витисем 33, сурӑх витисем 39, чӑх-чӗп усрамалли витесем 22 çӗнӗрен туса лартнӑ. Ку витесенче 131 лаша, 1.642 ӗне, 810 пӑру, 1.629 сысна, 4.450 сурӑх, 5.750 чӑх-чӗп вырнаçтарса хӗл каçарма пулать.

Çапла пулсан та, выльӑхсене зоотехника кӑтартса панӑ пек пӑхса усрама чылай колхозсенче çуртйӗрсем халӗ те çитмеççӗ-ха. Выльӑх витисене юсаса хатӗрлес ӗç республикӑра пачах çителӗксӗр пулса пырать. Октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне лаша витисене 59 процент çеç, ӗне витисене 32,2 процент çеç юсаса ӑшӑ пытмалла тунӑ. Çавӑн пекех пӑрусене, сурӑх-качакасене тата сыснасене хӗл каçармалли çуртйӗрсем те чылай колхозсенче хатӗр мар. Кӑçал республикӑра пин çурӑ ытла ӗнене, виçӗ пин ытла пӑрува, тӑватӑ пин ытла сысна, пин ытла сурӑх, пилӗк пин ытла чӑх-чӗпе вырнаçтарса хӗл каçарма фермӑсенче çуртйӗрсем çитмеççӗ. Вӗсене колхозниксен килӗсенчи витесемпе сарайсенче тытса усрамалла пулать.

Çамрӑк выльӑхсене сыхласа усрасси уйрӑмах пысӑк ӗç пулса тӑрать. 1943 çулта колхозсен фермисем çӗнӗрен 14.893 пуç пӑру, 3.891 пуç сурӑх тата 1.626 пуç сысна туянчӗç. Вӗсене чипер пӑхса çитӗнтересси—ферма работникӗсен ответлӑ задачи пулса тӑрать. Колхозсемпе совхозсенче выльӑхсене хӗл каçарма хатӗрленес ӗç кая юлса пыни çамрӑк выльӑхсемшӗн йывӑр условисем тума пултарать. Çакна шута илсе, выльӑх-чӗрлӗхе хӗле кӗртме пур енӗпе те тӗплӗн хатӗрленсе çитмелле. ЧАССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ кӑтартса панӑ мерӑсене кашни колхозра халех, пӗр тӑхтаса тӑмасӑр пурнӑçа кӗртмелле.

Выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каçарма хатӗрленсе çитнипе çитменнине палӑртмалли государственнӑй тӗрӗслӗве пысӑк ответлӑхпа туса ирттермелле. «Колхозсемпе совхозсенче выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каçарма хатӗрленмелли мерӑсем çинчен» Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ йышӑннӑ постановлениe кашни колхозрах тӗплӗн пурнӑçа кӗртӗр! Выльӑх-чӗрлӗхе ӑшӑ та çутӑ витесенче тата тутӑ усраса хӗл каçарма тӗплӗн хатӗрленсе çитер!

Пирӗн авиаци Джанкой, Могилев, Орша, Городок чугун çул тӗввисене тата тӑшманӑн аэродромӗсене тапӑнни

Октябрӗн 13-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн авиаци нимӗçсен Джанкой, Могилев, Городок (Витебскран çурçӗртерехре), Орша чугун çул тӗввисенче пуханса тулнӑ çар эшелонӗсем çине бомбӑсем пӑрахнӑ. Бомбӑсем тӳрӗ пырса тивнипе темиçе чугун çул составӗ сирпӗнсе кайнӑ. Бомба пӑрахнипе пула пушарсем нумай тухнӑ, тӑшманӑн техникӑпа çар пурлӑхӗ тиенӗ платформӑсемпе вагонӗсем, çавӑн пекех тата горючи тултарнӑ цистернисем çуннӑ. Пушарсенче вӑйлӑ взрывсем пулнӑ.

Çав çӗрех пирӗн авиаци тӑшман аэродромӗсене пыра-пыра çапнӑ. Бомбӑсем нимӗç самолечӗсем тӑракан вырӑнсенче çурӑла-çурӑла кайнӑ. Тӑшман аэродромӗсене пулеметсемпе тата тупӑсемпе пенӗ.

Пирӗн 2 самолет хӑйсен базине таврӑнман.

ЯЛХУҪАЛӐХ ӖҪӖСЕНЕ ВӖҪЛЕМЕЛЛИ ФРОНТОВОЙ УЙӐХЛӐХ

Авӑн ҫапса пуҫтартӑмӑр

ШАХАСАН. Пирӗн «Ямурза» колхоз членӗсем авӑн ҫапнӑ ҫӗртме пысӑк хастарлӑх кӑтартрӗҫ. Итем ҫинче кунӗн-ҫӗрӗн тенӗ пекех ӗҫ вӗресе тӑчӗ, 30—35 ҫын ывӑнма пӗлмесӗр авӑн ҫапрӗҫ. Октябрӗн 7-мӗшӗнче вара пирӗн колхоз тырпула пӗтӗмпех ҫапса пуҫтарса кӗртрӗ. Ҫапла итем ҫинчи ӗҫе эпир ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗмӗр.

Ҫак кунсенче пирӗн колхоз государствӑна ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫсем парса татрӗ. Государство хакӗпе районри организацисене 18 центнер ҫӗрулми сутрӗ.

И. НЕСТЕРОВ.

Улӑва хаваслӑн кӗтсе илетпӗр

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кӗчкей ялсоветӗнчи «Красный Корт» колхоз Коломна районӗнчи колхозниксем чӗннипе Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнчӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем Октябрь уявне ялхуҫалӑхӗнчи мӗнпур ӗҫсене ӑнӑҫлӑн вӗҫленипе, государство умӗнчи пур парӑмсене те срокчен парса татнипе кӗтсе илсе паллӑ тума шутлаҫҫӗ. Халӗ колхоз тата пур колхозниксемпе колхозницӑсем те государствӑна ашкакай, сӗт-ҫу, ҫӑмарта, брынза, ҫӑм парса татрӗҫ. Ҫавӑн пекех колхоз государствӑна тырӑ памалли 1943 ҫулхи плана та тултарчӗ, пахча-ҫимӗҫсемпе ҫӗрулмине те парса татрӗ.

Н. АНДРЕЕВ,
Колхоз счетоводӗ.

10 колхоз авӑн ҫапса пӗтернӗ

КАНАШ, октябрӗн 14-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Районри колхозсем фронтовой уйӑхлӑха хутшӑнса, авӑн ҫапас тата хӗле хатӗрленес ӗҫсене вӗҫлесе пыраҫҫӗ. План тӑрӑх районӗпе 17.735 гектар тыррине ҫапмалла пулнӑ пулсан, паянхи куна 14.000 гектар ҫинче тырӑ ҫапнӑ. Октябрӗн 12-мӗшӗ тӗлне 10 колхоз авӑн ҫапса пӗтерчӗ. Вӑл шутра «Акатуй», «Коминтерн», «Новый путь», Киров ячӗпе хисепленекен колхозсем. Ҫак кунсенчех «Идея Ленина», «Мотор», «Красное пламя», Киров ячӗпе хисепленекен колхозсем авӑн ҫапса пӗтереҫҫӗ.

Анчах та районра авӑн ҫапас ӗҫе вӑраха яракан колхозсем те пур. Тӗслӗхрен, «Красный Октябрь», «Красная Звезда», «1-ое мая» колхозсем ҫуррине яхӑн ҫеҫ ҫапнӑ. Кунти колхоз руководителӗсем уяр сантлӑкпа усӑ курса юлма тӑрӑшмаҫҫӗ.

В. ИЗЮМОВ.

График мӗншӗн пурнӑҫланмасть?

Крендейкассинчи «Ҫӗньял» колхозӑн ялхуҫалӑх ӗҫӗсене вӑхӑтра пурнӑҫласа пыма майсем пур. Куллен ӗҫлеме пултаракан ҫынсем колхозра 70 ытла, лашасем ҫителӗклӗ, колхозӑн электричество вӑйӗпе ӗҫлекен молотилка пур тата чылай ӗҫсене кӑҫал МТС туса панӑ. Ҫапах та колхоз председателӗ Михайлов юлташ хӑй ӳрӗк-сӳрӗк ӗҫленине «йывӑрлӑхсем» тупса витме пӑхать.

Фронтовой уйӑхлӑх пуҫланнӑранпа чылай кунсем иртрӗҫ, анчах колхоз ӗҫӗнче нимӗнле улшӑну та пулмарӗ. Электромолотилка ахаль ларать, авӑна лашасемпе те аштармаҫҫӗ, тӑпачӑсемпе те ҫапмаҫҫӗ. «Ӗҫ вӑйӗ ҫук», теҫҫӗ бригадирсем, председатель вӗсене ӗненет. Октябрӗн 9-мӗшӗнче итем ҫине авӑн ҫапма 4 колхозница ҫеҫ тухнӑ. Председатель пӗлмест ытти 70 ҫын мӗн тунине. «Халӗ ҫӗрулми кӑларатпӑр-ха, авӑн ҫапса ӗҫ вӑйне сапалас мар терӗмӗр», тет председатель. Анчах ҫӗрулми кӑларнӑ ҫӗрте вӑл кун мӗнпурӗ те 22 ҫын ҫеҫ ӗҫленӗ. Ыттисем ӑҫтине председатель пӗлмест. Ҫапла, октябрӗн 9-мӗшӗнче 50 колхозник ӗҫе пачах тухманни, вӗсемпе пӗрле колхоз председателӗпе бригадирсем наянланса ларни те уҫҫӑнах курӑнать.

«Ҫӗньял» колхоз авӑна халӗ ҫурри те ҫапман, государствӑна 258 центнер вырӑнне 177 центнер ҫеҫ тырӑ панӑ. Кӗрхи ҫӗртме пачах туман, тракторпа сухаласа парасси ҫине шанса лараҫҫӗ. Махорка татса типӗтме ҫакни уйӑх ытла, вӑл ӗнтӗ ытлашши те типсе кайнӑ, анчах государствӑна пӗр килограмм та леҫсе паман.

Ҫакӑн пек колхозсене районри партипе совет организацийӗсен халех пулӑшу парас пулать. Пӗр-ик кунлӑх колхоза пырса кайни ҫителӗксӗр, ӗҫпе пулӑшас пулать. «Ҫӗньял» колхозӑн итемӗ ҫинче МТС-ӑн тракторӗ август уйӑхӗнченпех ларать. «Краҫҫын ҫук», теҫҫӗ трактористсем. Анчах краҫҫын нарячӗ пур. Вӑл МТС директорӗн Константиновӑн аллинче. «Турттарса килме лаша ҫук», тет вӑл. «Ҫӗньял» колхозӗ ҫак кунсенче ҫӗрулми кӑларатпӑр тесе авӑн та ҫапмарӗ, патшалӑха та тырӑ леҫмерӗ. Ҫак колхозран краҫҫын илме пӗр пилӗк лав ҫӑмӑллӑнах яма пулнӑ. Кӑна та туман.

«Ҫӗньял» колхозри комсомол организацийӗнче 10 ҫамрӑк. Икӗ уйӑх хушши комсомолӑн пуҫламӗш организацийӗ секретарьсӗр пурӑнать. Ҫак вӑхӑтра организаци ӗҫӗ сӳнсе ларнӑ. ВЛКСМ Красноармейски райкомӗ ку организацие куҫран ҫухатнӑ.

Фронтовой уйӑхлӑх вӗҫленсе килет. Октябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне пур колхозсенче те авӑн ҫапса пӗтерес пулать, патшалӑх умӗнчи парӑмсене парса татас пулать. Авӑн ҫапмалли, патшалӑха тырӑ памалли тата кӗрхи ҫӗртме тумалли графиксене куллен пурнӑҫласа пымалла. Анчах Красноармейски районра ҫакӑншӑн ҫителӗксӗр кӗрешеҫҫӗ.

С. ШАДИН.
КРАСНОАРМЕЙСКОЕ.

Ҫитменлӗхсене халех пӗтермелле

КОМСОМОЛЬСКОЕ, октябрӗн 14-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Малта пыракан «Красный Октябрь», «Трактор», «Искра», Шмидт ячӗпе хисепленекен тата ытти хӑшпӗр колхозсем фронтовой уйӑхлӑхӑн малтанхи икӗ эрнинче ялхуҫалӑх ӗҫӗсене пӗтӗмпех вӗҫлерӗҫ. Ку колхозсен руководителӗсем, коммунистсемпе партире тӑман большевиксем агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫе хуҫалӑхри ӗҫсемпе таччӑн ҫыхӑнтарса пычӗҫ, тӑван ҫӗршыв умӗнчи хӑйсен обязанноҫӗсене чыслӑн пурнӑҫларӗҫ. Государствӑна тырӑ срокчен парса татса, 1944 ҫулхи обязательствӑсен шучӗпе татах темиҫе ҫӗр центнер ытла тырӑ пачӗҫ.

Ҫав хушӑрах районри уйрӑм колхозсем — вӑл шутра «Большевик» (председателӗ Боровков), «Культура» (председателӗ Алексеева), «Игенче» (председателӗ Трофимов) тата хӑшпӗр ытти колхозсем питех те кая юлчӗҫ. Асӑннӑ колхозсен председателӗсем вӗсен государство умӗнчи обязательствисене, иртнӗ ҫулхи пек, малта пыракан колхозсем пурнӑҫласа пырасси ҫине шанса лараҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вӗсем тырӑ леҫес ӗҫе сӳрӗккӗн туса пыраҫҫӗ. Транспорт бригадисене хут ҫинче ҫеҫ организацисе тунӑ. Вӑтам шутпа кашни кун ку колхозсен хатӗрлев пунктне 60—70 центнер тырӑ леҫсе памалла пулсан, вӗсем 8—10 центнер ҫеҫ леҫеҫҫӗ. Ку колхозсенче кӗрхи ҫӗртме те юлса пырать, ҫӗрулмине вӑрахӑн кӑлараҫҫӗ.

«Янга Турмыш» колхоз ҫапнӑ тырӑ ҫук тесе государствӑна тырӑ парас ӗҫе чӑрмантарса тӑнӑ. Авӑн ҫапас ӗҫе организацилемен. Ҫав вӑхӑтра колхоз тыррине авансла валеҫсе пӗтерме тытӑннӑ. Вӑрлӑх участокӗнчи сортлӑ тырра та пӗтӗмпех салатса янӑ. Ҫакӑн пек, государствӑна хирӗҫле ӗҫ тунӑшӑн колхоз председателӗ пулнӑ Иштякова халь судпа ответ тытараҫҫӗ.

Коммунистсен октябрӗн 10-мӗшӗнче пулса иртнӗ районри пухӑвӗ ялхуҫалӑх ӗҫӗсенче юлса пыракан колхозсен руководителӗсене вирлӗн критикӑларӗ. Пуху кая юлнӑ колхозсене пулӑшу пама, унти ҫитменлӗхсене халех пӗтерме, руководительсен ответлӑхне ӳстерме хушса хӑварчӗ.

Н. МИХАЙЛОВ.

Выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма хатӗрленсе ҫитрӗҫ

КАЛИНИНО. Услапари «Броневик» колхозра обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма хатӗрленсе ҫитрӗҫ. Выльӑх-чӗрлӗх валли ҫителӗклӗ таран апат хатӗрлерӗҫ. Ҫак кунсенче икӗ лаша витин урайӗсене ҫӗнӗрен сарчӗҫ, витесен стенисене шал енчен тӑмпа шуратрӗҫ. Ӗне витисен тӑррисене улӑм витрӗҫ, шӑтӑк-ҫурӑксене питӗрчӗҫ. Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх витисене юсаса ӑшӑтас ӗҫре ремонт бригади (бригадирӗ В. Мясников) тӑрӑшса ӗҫлерӗ.

Б. Ш.

Гектартан 17 центнер тулӑ илнӗ

ШАХАСАН. «Заря» колхозри П. Дмитриев ертсе пыракан бригада кӑҫал ҫурхи тулла вӑхӑтра акса, вӑхӑтра вырса, пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртрӗ. Ҫак кунсенче вӑл ӑна ҫапса пӗтерчӗ. Ҫурхи тулӑ гектартан вӑтам шутпа 17 центнер ытларах тухрӗ.

С. АСЛАН.

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Вырӑнти топливо промышленность Управленийӗн предприятийӗсенчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн сентябрь уйӑхӗнчи итогӗсем ҫинчен

Чӑваш АССР Совнаркомӗ, вырӑнти топливо промышленность предприятийӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1943 ҫулхи сентябрь уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, ӑмӑртура Шупашкар, Улатӑр, Красноармейски, Вӑрнар леспромхозӗсем мала тухнӑ тесе йышӑннӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Улатӑр леспромхозӗнчен илсе Шупашкар леспромхозне (директорӗ Кобяков, Горсовет исполкомӗн председателӗ Аникин) пама тата ӑна ӑмӑртура палӑрнӑ рабочисемпе инженерла-техникла работниксене, служащисене премилеме 20.000 тенкӗ укҫа пама йышӑннӑ.

Улатӑр леспромхозне (директорӗ Горланов) ӑмӑртура палӑрнӑ работниксене премилеме пӗррмӗш преми —15.000 тенкӗ укҫа пама йышӑннӑ. Красноармейски леспромхозне (директорӗ Вишнев, районсовет исполкомӗн председателӗ Александров) тата Вӑрнар леспромхозне (директорӗ Скворцов) иккӗмӗш преми—10-шар пин тенкӗ пама йышӑннӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ сентябрь уйӑхӗнче вутӑ хатӗрлес тӗлӗшпе Хӗрлӗ Чутай, Сӗнтӗрвӑрри, Вӑрмар, Тӑвай, Комсомольски, Советски, Сӗнтӗр тата Елчӗк леспромхозӗсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Тимӗр-тӑмӑр пухакансен паха ӗҫӗсем

Предприятисемпе хуласенче тата колхозсенче халӑх хуҫалӑхӗн чылай отраслӗсемшӗн паха чӗртавар пулса тӑракан тимӗр-тӑмӑр, ҫӗтӗк-ҫурӑксем сахал мар тупма пулать. Ҫавсене пухас енӗпе тимлӗн ӗҫлекен работниксем тата организацисем государствӑна тимӗр-тӑмӑр тата ҫӗтӗк-ҫурӑксем нумай пухса параҫҫӗ.

Союзутилӗн Шупашкарти конторинче ӗҫлекен Г. И. Трепнев юлташ хӑйӗн ҫулталӑкри планне тӗслӗ металсем пухас енӗпе 1000 процент, хура металсем пухас енӗпе 900 процент, ҫӗтӗк-ҫурӑксем пухас енӗпе 400 процент тултарнӑ. А. Раев, Ш. Паранчаев юлташсем те вӗсенчен нумай кая юлман. Кунта уйрӑм ҫынсем кӑна мар, пӗтӗм коллектив лайӑх ӗҫлет. Плана пӗр сборщик кӑна тултарайман. Ҫавӑнпа ӗнтӗ пирӗн Шупашкарти хатӗрлев конторине куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялав пачӗҫ.

Куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялава илнӗ чухне пирӗн коллектив хура тата тӗслӗ металсем пухас енӗпе ҫулталӑкри плана Октябрь уявӗ тӗлне, ҫӗтӗк-ҫурӑксем пухас енӗпе Конституци кунӗ тӗлне тултарма сӑмах пачӗ. Ҫакна пурнӑҫа кӗртессишӗн вара кашни работник пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлерӗ. Халӗ ӗнтӗ коллектив хӑй илнӗ обязательствӑсене срокчен пурнӑҫа кӗртни ҫинчен пӗлтерме пултарать. Ҫулталӑкри плана эпир тимӗр-тӑмӑр, ҫӗтӗк-ҫурӑксем, макулатура хатӗрлес енӗпе ирттерсе тултартӑмӑр. Пухнӑ тимӗр-тӑмӑрсене тиесе ярас плана 157 процент, ҫавӑн пекех ҫӗтӗк-ҫурӑксене тиесе ярас плана та ирттерсе тултарнӑ.

Халӗ пирӗн коллектив халӑх хуҫалӑхне тата ытларах тимӗр-тӑмӑр, ҫӗтӗк-ҫурӑксем пухса пама тӑрӑшса ӗҫлет.

И. ХЛЕБНОВ,
Союзутилӗн Шупашкарти конторин управляющийӗ.

4-мӗш кварталти плана Конституци куне тӗлне тултаратпӑр

КАЛИНИНО. Районри малта пыракан ялсоветӗсем 3-мӗш кварталта укҫа-тенкӗ пухас плана ирттерсе тултарнӑ. Ҫапла, сӑмахран, Хӑмӑш ялсовечӗ ӑна 228 процент, Карачура ялсовечӗ—166 процент, Уйкас Юнтапа ялсовечӗ—157 процент тултарнӑ. Анчах та, районӗпе илсен, укҫа-тенкӗ пухасси ҫителӗксӗр пырать-ха. Ку тӗлӗшпе Кадеркино, Уйкас, Юманай ялсовечӗсем начар ӗҫлеҫҫӗ. Ҫавсене пула ӗнтӗ Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Калинино районӗнчен илсе, урӑх района панӑ.

Районри финанс работникӗсем тата колхозсемпе ялсовет председателӗсем 3-мӗш кварталти ӗҫ итогӗсене пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн хӑйсем умне 4-мӗш кварталта Хӗрлӗ ялава татах хӑйсен аллине илес задача лартрӗҫ. Ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе халӗ уяв умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту саралса пырать. Район 4-мӗш кварталти плана Конституци кунӗ тӗлне пӗтӗмпех тултарса ҫитерме пулчӗ.

Б. ШОРНИКОВ.

Ют ҫӗршывсенче

Бадольо маршалӑн декларацийӗ

ЛОНДОН, октябрӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Итали правительствин пуҫлӑхӗ Бадольо маршал хӑй правительствин Бари хулинчи радиостанцийӗ урлӑ ҫак декларацие пӗлтернӗ:

«Итальянецсем! Эпӗ пуҫ пулса тӑракан правительство 1943 ҫулхи сентябрӗн 8-мӗшӗнче кӑларнӑ декларацире ҫакӑн ҫинчен пӗлтернӗччӗ: Англипе Америкӑн Вӑтаҫӗр тинӗс ҫинчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен главнокомандующийӗ, эпир перемири тума ыйтнипе килӗшсе, Итали ҫарӗсене хӗҫпӑшала аларан пӑрахмасӑр, анчах ҫапӑҫӑва хутшӑнмасӑр тӑма, ҫакӑнпа пӗрлех кирек хӑш енчен вӑйпа тапӑнсассӑн та ҫавна сирсе яма хатӗр тӑма хушнӑччӗ. Ҫӳлти власть хушнӑ тӑрӑх пирӗн ҫарсем хӑйсен ӗҫне туса пынӑ вӑхӑтра Германи ҫарӗсем пирӗн хӑшпӗр чаҫсене ирӗксӗрлесе хӗҫпӑшалсӑрлантарчӗҫ, ҫавӑнпа пӗрлех вӗсем чылай ҫӗрте пирӗн ҫарсене тапӑнма тытӑнчӗҫ. Анчах та нимӗҫсен сӗмсӗрлӗхӗпе тискерлӗхӗ ҫакӑн ҫинче чарӑнса тӑмарӗ. Вӗсем тунӑ тискер ӗҫсен тӗслӗхӗсене эпир куртӑмӑр ӗнтӗ. Ҫакӑ вӑл вӑйпа усӑ курса усал ӗҫсем тунинче, вӗсем пирӗн союзниксем пулнӑ вӑхӑтрах Катанире тунӑ ҫаратусенче тата ытти майсемпе ирӗксӗрлесе пусмӑрланисенче палӑрчӗ. Пирӗн хӗҫпӑшалсӑр халӑха хирӗҫ вӗсем Калабрире, Апулире, Салерно районӗнче татах та тискертерех ӗҫсем туса ирттернӗ. Анчах та тӑшманӑн Неапольри тискер ӗҫӗсем этем шухӑшлама пултарнинчен пӗтӗмпех иртсе кайрӗҫ. Ҫав хулан геройла халӑхӗ, темиҫе эрне хушши пур тӗрлӗ асапсене те тӳссе ирттерсе, Англипе Америка ҫарӗсене активлӑн пулӑшса пычӗ, курайман нимӗҫсене хӑваларӗ.

Итальянецсем! Пирӗн ҫӗр ҫинче пӗр нимӗҫ те пулин пур пулсан, Италире мир кӗтме ҫук-ха. Пирӗн хамӑрӑн тусӑмӑрсемпе—Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе, Великобританипе, Российӑпа тата мӗнпур пӗрлешнӗ халӑхсемпе ҫумма-ҫуммӑн тӑрса, малалла каймалла. Итали ҫарӗсем кирек ӑҫта пулнӑ пулсан та—вӗсем Балканра-и, Югославире-и е Албанипе Грецире пулнӑ,—вӗсем агрессипе тискер ӗҫсене пур ҫӗрте те курнӑ, ҫавӑнпа та вӗсен нимӗҫсемпе юлашки ҫын юлмиччен кӗрешмелле. Эпӗ пуҫ пулса тӑракан правительствӑна ҫывӑх вӑхӑтсенчех ҫӗнӗ ҫынсем хутшӑнаҫҫӗ. Вӑл Италин чӑн-чӑн демократиллӗ правительстви пулса тӑтӑр тесе, унта ӗҫлеме мӗнпур политикӑллӑ партисен представителӗсене хутшӑнтараҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтри килӗшӳ вӑл, мир тусассӑн, Итали халӑхӗн хӑй валли демократиллӗ тытӑм суйласа илмелли вӗҫӗмсӗр ирӗклӗ правине нихӑш енчен те хӗссе тӑмасть. Итальянецсем! Сире эпӗ ҫакӑн ҫинчен хыпар паратӑп: унӑн величестви король мана паян, октябрӗн 13-мӗшӗнче, Германие хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫлани ҫинчен пӗлтерме хушрӗ».

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн, Великобританин тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительствисем Итали союзниксемпе пӗрле вӑрҫакан ҫӗршыв пулса тӑнине йышӑнасси ҫинчен кӑларнӑ

ДЕКЛАРАЦИ

Паян, октябрӗн 13-мӗшӗнче, Итали Германие хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫланӑ майпа, Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн, Великобританин тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительствисем Итали союзниксемпе пӗрле вӑрҫакан ҫӗршыв пулса тӑнине йышӑнни ҫинчен ҫакӑн пек деклараци пичетлесе кӑларма шут турӗҫ:

«Совет Союзӗн, Великобританин тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительствисем Италин королевски правительствин позицине, Бадольо маршал пӗлтернӗскерне, йышӑнаҫҫӗ тата Итали халӑхӗпе унӑн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсем Германие хирӗҫ пыракан вӑрҫӑра союзниксемпе пӗрле тӑрса активлӑн вӑрҫнине ырлаҫҫӗ. Сентябрӗн 8-мӗшӗ хыҫҫӑн пулса иртнӗ вӑрҫӑри событисем тата нимӗҫсем Итали халӑхне тискеррӗн тыткалани Итали Германие хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫласси патне илсе ҫитерчӗ, ҫакӑ вӑл Италие пирӗнпе пӗрле вӑрҫакан ҫӗршыв туса хучӗ, Совет Союзӗн, Британин тата Америкӑн правительствисем ҫак никӗс ҫинче вара Итали правительствипе малашне пӗрле ӗҫлесе пырӗҫ. Нимӗҫсене Италирен хӑваласа кӑларнӑ хыҫҫӑн Итали правительстви Итали халӑхӗн ирӗкне пӑхӑнма сӑмах панине виҫӗ правительство та йышӑнаҫҫӗ. Итали халӑхӗн, конституциллӗ йӗркесем тӑрӑх, правительствӑн демократиллӗ форми тӗлӗшпе решени йышӑнас тивӗҫлӗ правине никам та, нимӗнле те хӗсме пултараймасть.

Итали правительствипе пӗрлешнӗ нацисен правительствисем хушшинчи ҫак вӑрҫа пӗрле туса пырас никӗс ҫинче пулса пыракан ҫыхӑнусем нумаях пулмасть алӑ пуснӑ перемири условийӗсене хӑйсем тӳлӗн улшӑнусем кӳме пултараймаҫҫӗ, ҫав условисем вӗсем хӑйсен пӗтӗм вӑйне ҫаплипех сыхласа хӑвараҫҫӗ тата вӗсене союзниксен правительствисем пӗр-пӗринпе килӗшнӗ тӑрӑх, Итали правительстви пӗрлешнӗ нацисен ӗҫне мӗн чухлӗ пулӑшу панине кура ҫеҫ улӑштарма пултараҫҫӗ».

Итали флочӗн кунҫулӗ пирки Черчилль пӗлтерни

ЛОНДОН, октябрӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, паян Черчилль общинӑсен палатинче хӑйне панӑ ыйтусем ҫине ответлесе ҫапла каланӑ: Итали флочӗн пысӑк пайӗ, урӑхла каласан — Италин пур йышши вӑрҫӑ карапӗсенчен ҫӗрӗшӗ ытла, союзниксен аллинче тӑрать.

«Тӗплӗнтерех пӗлтерни обществӑлла усӑ кӳмен пулнӑ пулӗччӗ,— тенӗ Черчилль.—Карапсемпе вӗсен командисен кунҫулӗ ҫинчен халь тӗплӗн сӳтсе яватпӑр. Ҫав карапсемпе эпир пӗрлешӳллӗ нацисемшӗн май пур таран ытларах усӑ курма тӑрӑшатпӑр», тенӗ.

Англи Итали корольне Абиссини императорӗ тесе шутламасть

ЛОНДОН, октябрӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Англин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствин парламент секретарӗнчен Холлтан общинӑсен палатинче ҫапла ыйтнӑ: «Англи правительстви малтанхи пекех Итали корольне Абиссини императорӗ тесе шутлать-и», тенӗ. Холл ҫак ыйту ҫине: «Ҫук, шутламасть», тесе ответ панӑ.

Италири вӑрҫӑ ӗҫӗсем

ЛОНДОН, октябрӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Ҫурҫӗр Африкӑри ҫарӗсен штабӗ ҫапла пӗлтерет: юлашки 24 сехет хушшинче американецсен 5-мӗш армийӗн тата акӑлчансен 8-мӗш армийӗн фрончӗсенче артиллери кӑна хире-хирӗҫ персе тӑнӑ тата патруль ӗҫӗсене туса тӑнӑ.

Октябрӗн 11-мӗшӗнче союзниксен бомбардировщикӗсем Албани ҫывӑхӗнчи Корфу утравӗ ҫинчи аэродрома атакӑланӑ. Италире тӑшманӑн артиллери позицийӗсене, автомобиль транспортне тата поездсене тапӑннӑ. Ҫав вӑхӑтрах истребительсем ҫапӑҫусен районӗ тӗлӗнче сыхласа вӗҫсе ҫӳренӗ, тӑшман вӗсене хирӗҫ тӑни пулман.

Октябрӗн 11-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Римран ҫурҫӗртерехре тата Фрозиноне ҫывӑхӗнче моторизованнӑй колоннӑсене атакӑланӑ.

НИМӖҪСЕН ЭГЕЙ ТИНӖС РАЙОНӖНЧИ АЭРОДРОМӖСЕМ ҪИНЕ БОМБӐСЕМ ПӐРАХНИ

ЛОНДОН, октябрӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтереҫҫӗ: октябрӗн 11-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле акӑлчансен йывӑр бомбардировщикӗсем Родос утравӗ ҫинчи Калато патӗнчи аэродромсене атакӑланӑ. Бомбӑсем самолетсем тӑнӑ вырӑнсенче тата вӗҫсе улӑхмалли, анса лармалли ҫул ҫинче ҫурӑла-ҫурӑла кайнӑ. Пушарсем тухнӑ. Октябрӗн 10-мӗшӗнче союзниксен самолечӗсем Крит утравӗ ҫинчи Гераклионри аэродромсене, Родос утравӗ ҫинчи Калатори тата Кос утравӗ ҫинчи Антимакийӑри аэродромсене атакӑланӑ.

АНГЛИН ХӖҪПӐШАЛЛӐ ВӐЙӖСЕМ АЗОР УТРАВӖСЕМПЕ УСӐ КУРАССИ ҪИНЧЕН АНГЛИПЕ ПОРТУГАЛИ ХУШШИНЧЕ ТУНӐ КИЛӖШӲ

ЛОНДОН, октябрӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, премьер-министр Черчилль общинӑсен палатинче ҫапла каланӑ: Англипе Португали правительствисем Атлантикӑра суту-илӳ суднисене хӳтӗлес ӗҫре Англи правительствине Азор утравӗсемпе усӑ курма май паракан килӗшӳ тунӑ. Португалие Англия хӑй енчен япаласем тата хӗҫпӑшалсем тӑратать.

Азор утравӗсемпе усӑ курас тӗлӗшпе тунӑ договор вӑл вӑхӑтлӑха тунӑ договор пулса тӑрать, тенӗ Черчилль. Вӑл Португалин территорине Португалия тытса тӑрас ӗҫе нимӗн чухлӗ те сиен кӳмест. Вӑрҫӑ ӗҫӗсем пӗтнӗ хыҫҫӑн Англи ҫарӗсене Азор утравӗсем ҫинчен илсе каяҫҫӗ.

Договорта кӑтартнисем Португалие вӑрҫа хутшӑнас мар тенӗ политикӑна тытса пыма чӑрмантармаҫҫӗ.

РУЗВЕЛЬТ АЗОР УТРАВӖСЕМ ҪИНЧИ БАЗӐСЕМПЕ УСӐ КУРАССИ ҪИНЧЕН КАЛАНИ

ЛОНДОН, октябрӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: Рузвельт каланӑ тӑрӑх, США-па Англия Португалие вӗсем Азор утравӗсене Португалирен тытса илме шухӑшламанни ҫинчен каласа шантарнӑ. Рузвельт ҫакна кӑтартса панӑ: США Азор утравӗсем ҫинчи базӑсемпе Англипе пӗрле усӑ курма пулать. Кун ҫумне президент ҫапла хушса каланӑ: питӗ кирлӗ вӑхӑт сиксе тухсан, Азор утравӗсем ҫинчи базӑсемпе тӗнӗл держависемпе вӑрҫакан ытти нацисем те усӑ курма пултараҫҫӗ, тенӗ.

КӖСКЕН

● Союзниксен ҫарӗсем Италин Неаполь хули ҫывӑхӗнче ҫӗр айӗнчи шӑтӑкра авиаци валли моторсем тӑвакан завод тупнӑ. Заводра электричество ҫуттипе ӗҫленӗ. Унта Германипе Итали истребителӗсем валли авиаци двигателӗсем пухнӑ. Вӑрҫӑччен ҫак шӑтӑксенче Неаполь ҫыннисем ҫуртйӗр тума чул кӑларнӑ.

Неаполь ҫывӑхӗнчи тепӗр питӗ пысӑк шӑтӑкра Итали авиацийӗн ремонт тӑвакан мастерскойӗсене тупнӑ. Ҫав мастерскойсенче самолет ҫуначӗсем тата ытти чаҫсем нумай тупнӑ. Ҫав мастерскойсенчен нумайӗшне гитлеровецсем хӑйсем Неапольрен каялла чакнӑ чухне ҫӗмӗрсе хӑварнӑ.

● Ҫак ҫулӑн малтанхи 8 уйӑх хушшинче Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем ют патшалӑхсене 7 миллиард та 963 миллион долларлӑх тавар сутнӑ. Ку шута хӗҫпӑшала кивҫен е аренда йӗркипе памалли закон тӑрӑх панӑ вӑрҫӑ хатӗрӗсем те кӗреҫҫӗ. Пӗлтӗрхи 8 уйӑхпа танлаштарсан, вӑл 64 процент ытларах пулать. Ҫав 8 уйӑх хушшинчех Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем ют патшалӑхсенче 2 миллиард та 168 миллион долларлӑх тавар илнӗ. Пӗлтӗрхи 8 уйӑх хушшинче пӗр миллиард та 819 миллион долларлӑх илнӗ пулнӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1131 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 84 п. л